25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ИЮЛЬ
3
ШАМАТКУН
136(6373) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Мастер—производство организаторĕ

Виççĕмĕш çул пыракан Отечественнăй вăрçă пирĕн предприятисен производство программине улăхлатрĕ. Чылай фабрикăсемпе заводсен, артельсемпе мастерскойсен фронтăн васкавлă заказĕсене илме тиврĕ. Çав заказсене пурнăçласси — кашни предприяти коллективĕн хисеплĕ ĕçĕ, унăн тăван çĕршыв умĕнчи таса тивĕçĕ пулса тăрать. Фронт хăйне кирлĕ продукцие çителĕксĕр е начар туса кăларнине, кая хăварса çитерсе пани́не тÿсме пултараймасть. Производствăри ĕçе лайăх организацилес тата ăна пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерес, лайăх пахалăхлă продукци парса тăрас тĕлĕшре производствăри мастерсен ролĕ уйрăмăнах ÿсрĕ. Пирĕн партипе правительство вĕсен ĕçне яланах пысăк вырăна хурса хаклать.

Икĕ çул каярах ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ. «Йывăр машиностроени завочĕсенчи мастерсен рольне ÿстересси çинчен» кăларнă постановленире мастерсен производствăри ролĕ çинчен уççăн кăтартса панă.

Мастер хăйне шанса панă ĕçшĕн, цехри е бригадăри ĕçшĕн ответлă пулса тăрать. Камăн цехри ĕçе тĕрĕс организацилемелле? Мастерăн. Камăн рабочисемпе работницăсене задание пурнăçлама пулăшса пымалла? Мастерăн. Камăн пысăк пахалăхлă продукцишĕн кĕрешмелле? Мастерăн. Хальхи вăхăтра производствăра мастерсен ответлăхĕ ÿсрĕ.

Республикăри малта пыракан предприятисем вăрçă условийĕсенче тикĕс ĕçлеççĕ, кирек мĕнле участокри ĕçсене те пысăк хăвăртлăхпа тăваççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод çĕршыва кирлĕ продукцие те, фронта кирлĕ заказсене те ăнăçлăн туса кăларать. Вăл май уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Пĕр цехăн мастерĕ Троицкий юлташ хăй ĕçлеме пуçланăранпа темиçе çамрăка производствăра ĕçлеме вĕрентнĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем халĕ квалификациллĕ рабочисем пулса ĕçлеççĕ.

1943 çулта Шупашкарти тир-сăран заводне 15 çулхи Ваня Павловпа О. Оскир ĕçлеме кĕнĕ. Вĕсен малтан нимĕнле специальность та пулман. Атă-пушмак çĕлекен мастерскойăн начальникĕ М. Бурмистрова юлташ çамрăксене чи малтанах çăмăл ĕçсем панă. Çав вăхăтрах ĕçлеме вĕрентсе пынă. Юлашки вăхăтра вĕсем иккĕшĕ те атă-пушмак çĕлекен ăстаçă пулса тăчĕç. Кашни кунах задание 150—200 процент тултараççĕ. Çавăн пекех Улатăрти паровозсем юсакан заводри сборочнăй цехăн начальникĕ Титов юлташ та темиçе çамрăка производствăра ĕçлеме вĕрентнĕ.

Мастер — вăл рабочисен учителĕ çеç мар, пĕтĕм производство процесĕн организаторĕ. Ăçта мастер ĕçе тĕрĕс организациленĕ, унта ĕç тухăçлăхĕ те пысăк. Мастерăн кашни рабочин пултарулăхĕпе пуçарулăхне пĕлсе тăмалла. Рабочисене вăхăтра ĕç парса, ăна пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăмалла. Вăл кашни рабочи ĕç хатĕрĕсемпе тĕрĕс усă курнине те асăрхаса тăма тивĕç.

Мастер хăйне çирĕплетсе панă рабочи мĕнле ĕçлесе пынишĕн ответлă. Цехра е бригадăра ĕç нормине тултармасăр ĕçлекен рабочи пулсассăн, çав рабочи ĕçре мĕншĕн юлса пынине тĕплĕн пĕлмелле. Ăна ĕçре куллен пулăшса тăмалла.

Кашни рабочипе работница социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине татăклă обязательствăсем илеççĕ. Мастер çак ĕçе тĕрĕс ертсе пырать пулсан, ăмăртура пур рабочи те тухăçлă ĕçлесе пырать. Анчах ăмăртупа куллен интересленсе пымасан, унăн производствăри çĕкленĕвĕ кирлĕ пек пулмасть. Çавăнпа та мастер производствăра социализмлă ăмăртăвăн организаторĕ пулса тăмалла. Ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн чунтан тăрăшмалла.

Вăрçă вăхăтĕнче мастерсем пулма опытлă рабочисемпе работницăсене те лартма тиврĕ. Ĕнер вăл рабочи пулнă, паян мастер.

Пирĕн парти организацисен мастерсене воспитани парас тĕлĕшпе политикăллă ĕçе куллен туса пымалла. Кашни мастер хăйĕн ĕçне ăнланса илсе, производствăра новатор пулса тăтăр.

Мастерсем! Эсир заводра рабочисемпе работницăсен чи çывăх начальникĕсем. Производствăри ĕçе большевикла организацилĕр! Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказне ĕçлĕн пурнăçлассишĕн вăл шеллемесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва ытларах та ытларах продукци парассишĕн кĕрешĕр!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 1-мĕшĕнче фронтра палăрнă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем тăшман позицийĕсене пенĕ, нимĕç артиллерин 3 батарейине тата темиçе пулемет пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 19 блиндажне ишсе антарнă. Тăшманăн персе тăракан точкисене пусарса лартнă хыççăн, совет разведчикĕсем пĕр вăхăтрах темиçе енчен те тăшман оборонин çирĕплетнĕ пунктне атакăланă. Пуçланса кайнă çапăçура нимĕçсен 70 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата 130 салтакĕпе офицерне çити амантнă. Разведчиксем трофейăсем тытса илнĕ тата темиçе гитлеровеца тыткăна илнĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче артиллери тата пăшалпа-пулеметсемпе перкелесе тăнă

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче темиçе кун каярах Карапетян юлташ командир пулса тăракан чăсри гвардеецсем нимĕçсен çирĕплетнĕ высотине атакăланă. Çав пите кирлĕ высотăран тăшман вăйлă çирĕплетнĕ пункт туса хунă, унта лайăх траншейăсем, çĕр алтса тунă çулсем, окопсемпе дзотсем нумай пулнă. Высота патне çывхарма май пур вырăнсенче талккăшпех минăсем хурса тухнă тата пралук картасем туса тултарнă. Гвардеецсем тăшмана хăватлăн пырса çапса высотана йышăнса илнĕ те çирĕпленсе ларнă. Высотана каялла туртса илме хăтланса тăшман 6 кун хушшинче 23 хутчен атака тунă. Гвардеецсем тăшман атакисене пурне те сирсе янă, туртса илнĕ позицисене халĕ те хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Çав çапăçусенче пирĕн боецсем нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, унсăр пуçне тыткăна илнисем те пур. Тăшманран 13 пулемет, 11 миномет, 110 винтовка, 18 автомат, 5 стереотруба, 2 радиостанци тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн артиллеристсем совет позицийĕсене перекен нимĕç танкне çунтарса янă. Унсăр пуçне тата совет артиллеристĕсем 3 дзотпа 2 блиндаж ишсе антарнă, гитлеровецсен ротине саланса янă тата тăшманăн боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Богуш юлташ командир пулса тăракан подразделенири артиллеристсем нимĕçсен пулеметлă 4 дзотне вĕсен гарнизонĕсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Снайпер Михаил Баранов хĕрарăмсене хураллаca пыракан икĕ нимĕç салтакне асăрханă. Баранов юлташ икĕ хутчен персе икĕ нимĕç салтакне те вĕлерсе пăрахнă. Хĕрарăмсем тарса пĕтнĕ.

* * *

Карели фронтĕнче Слицкий юлташ командир пулса тăракан подразделенири гвардеец-саперсем тăшманăн шалти тылне çитиччен кĕрсе кайнă та фронт линийĕ патне илсе пыракан шоссе çулĕ çинче минăсем хурса тухнă. Старши сержант Осипов çăмăл автомашинăсен колоннине асăрханă. Вăл офицерсем ларса пыракан 2 машинине сирпĕнтерсе янă. Взрыв вăхăтĕнче чĕрĕ тăрса юлнă нимĕçсене саперсем автоматпа персе вĕлернĕ. Саперсен ытти ушкăнĕсем тата 2 автомашинăпа вуншар нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Винница облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фронт линийĕ патне пыракан çар поездне ÿпĕнтерсе янă. Паровоз тата 26 вагон пĕтнĕ. Дзержински ячĕпе тăракан отрядри партизансем шоссе çулĕ çинчи 3 кĕпере çунтарса янă тата чугунçул линине 500 метр сирпĕнтернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем совет хулисемпе ялĕсенчи мирлĕ халăха пĕтереççĕ. Минск облаçĕнчи Блужски Бор ялĕнче гитлеровецсем старикĕсемпе хĕрарăмсене тата пĕчĕк ачасене 19 çынна вĕлернĕ, вăл шутра 60 çулхи старик Пронович, унăн арăмĕ тата ачи, унти учительница хăйĕн кăкăр ачипе тата 2 çулхи ывăлĕне пĕрле пулнă. Нумаях пулмасть, нимĕç бандичĕсем Маковье ялне кĕрсе кайнă та 112 çынна арестлесе сарая хупса лартнă. Вара çав пĕр айăпсăр çынсене чĕрĕллех çунтарса янă.

* * *

Болгарсен «Днесь» ятлă хаçачĕ июнĕн 24-мĕшĕнче хăйĕн 1-мĕш страницинче фотокарточка пичетлесе кăларнă. Çав карточка çинче пĕр старикпа çамрăк хĕр хиртен татса кĕнĕ йĕтĕне пахаласа тăнине кăтартнă. Карточка айне çапла çырса хунă: «Украинăри вăйлă тырпул. Германи правительстви оккупациленĕ территори çине çĕпĕ йĕрке туса панă. Вырăс хресченĕсем унăн çемьи хăйсен пуянлăхне тата вăйлă пулнă тырпулне пăхса савăнаççĕ», тенĕ.

«Днесь» хаçат редакцийĕ ахальтен мар çакăн çинчен нимĕн те шарламасăр хăварнă: Украинăн хăш районĕнче çавăн пек вăйлă йĕтĕне пăхса ÿстерсе пуçтарса кĕртнĕ-ши, карточка çинчи хресченĕн ячĕпе хушамачĕ мĕнле-ши? Болгари хаçачĕсен çĕтĕк-çатăк жуликсем, çав фотокарточкăна пичетлесе тата унăн айне малта кăтартса панă пек çырса, хăйсен черетлĕ ирсĕр ĕçне тунă. Хаçатра пичетлесе кăларнă фотокарточка çинче марийцсен Автономлă Советлă Республикинчи Сернурски районри «Свет» ятлă ялхуçалăх артелĕнчи йĕтĕн бригадин бригадирĕ, 65 çулхи колхозник Леонид Максимович Лаптев тата унăн помощникĕ колхозница Тоня Вершинина колхозри вăйлă пулнă йĕтĕне пахалани́е кăтартнă. Вăл карточкăна вăрçă пуçланиччен ÿкернĕ те фотографисен уйрăм альбомне кĕртсе хăй вăхăтĕнче ютсĕршывсене янă. «Днесь» хаçатăн редакцийĕнчи нимĕçсене сутăннă жуликсем совет ялĕнчи тулли пурнăçа кăтартакан кивĕ фотографие туртса кăларса усал элек сарма тытăннă, анчах та... пĕтĕм тĕнче умĕнче намăса кĕрсе ÿкнĕ. Вăрăсене алран ярса тытнă, вăрланă япаласем те хăйсен суйĕнчех пулнă.

Июлĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле палăрнă улшăнусем те пулман.

* * *

Июлĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Керчьпе Сенная портĕсене (Темрюкран 30 километр хĕвеланăçнерехре) тапăннă. Портра тăракан суднăсем çине тата тăшманăн склачĕсем çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем чылай пăрахнă. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçри разведчиксем çĕрле шурлăх урлă каçнă та нимĕç траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Автоматсемпе персе тата гранатăсем ывăтса, пирĕн боецсем гитлеровецсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă, вара тĕрĕс-тĕкĕлех хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Севск районĕнче майор Концедалов командир пулса тăракан подразделенири 18 снайпер юлашки вăхăтра 136 нимĕçе вĕлернĕ. Сержант Слюсарь юлташ 40 гитлеровеца, красноармеец Митин юлташ 30 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Белгород районĕнче гвардеец-разведчиксем Скрябин, Костычев тата Локтев юлташсем тăшман тăракан вырăна пĕр сассăр кĕрсе кайнă. Нимĕçсен блиндажĕ патне çитсен, разведчиксем уçса пăрахнă алăкран икĕ граната вăркăнтарнă. Çав вăхăтра Локтева 2 нимĕç тапăннă, ăна вĕсем тыткăна илме хăтланнă. Локтева пулăшма унăн юлташĕсем чупса пынă та гитлеровецсене персе пăрахнă. Нимĕç салтакĕсен пысăк ушкăнĕ, пирĕн разведчиксен çулне пÿлсе лартса, вĕсене çавăрса илме хăтланнă. Хĕссе пыракан гитлеровецсене пере-пере, разведчиксем хăйсен подразделенийĕ тăракан вырăна тĕрĕс-тĕкĕлех таврăннă.

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче тăшман пехотин пĕр роти пирĕн боевой хурала атакăланă. Взвод командирĕ лейтенант Игловиков юлташ боецсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле гитлеровецсене хирĕç çапăçма пуçланă. Пирĕн боецсем тăшман атакине сирсе янă, пĕр нимĕç офицерне тата 30 салтака яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн снайперсем июнь уйăхĕнче тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Снайпер Решетов сержант 23 гитлеровеца вĕлернĕ, Трегер сержант 18 нимĕçе, Паюмов сержант 50 нимĕçе, Рухамбаев красноармеец 18 нимĕçе, Анохин сержант 20 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен икĕ отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен пысăк вăйĕсемпе 3 кун хушши çапăçса, тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем пĕр оруди, 15 пулемет, 110 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Суворов ячĕпе тăракан отрядри партизансен ушкăнĕ тăшманăн чугунçул çинчи эшелонне сирпĕнтерсе янă. Паровоз, 9 вагон тата 24 платформа çĕмĕрĕлсе кайнă.

* * *

Нимĕçсен инçене вĕçекен разведчикĕсен 121-мĕш эскадрилйинчен тыткăна лекнĕ летчик Иоганн Л. çапла каласа панă: «Çак юлашки уйăхсенче гестапо Германи çарĕнчи уйрăм çынсене тытатыта хупать. Инçене вĕçекен разведчиксен резерври ушкăнĕнчен нумаях пулмасть Перцер унтер-офицера арестленĕ. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе калаçнă чухне Германия çак вăрçăра аяла пулать тесе каланă. Май уйăхĕ пуçламăшĕнчех пĕр подводнăй лодка командирне концентрациллĕ лагере хупнă. Çав командир текех вăрçма килĕшмен. Çав уйăхрах концентрациллĕ лагере тепĕр подводнăй лодка командирне илсе пынă. Кусем тинĕсре хăйсен командирне вĕлернĕ».

* * *

Бертри округĕнче (Бельги Люксембургĕ) патриотсем 42 паровоза юрăхсăра кăларнă. Нинове Граммон хушшинчи чугунçул участокĕ çинче ирĕклĕ стрелоксем хирĕ-хирĕç пыракан СС-овецсен эшелонне тавар поезчĕпе çапăнтарнă. Крушенире нумай гитлеровец вилнĕ е аманнă. Лимбург провинцийĕнче патриотсем пысăк фураж складне çунтарса янă. Мерксемре ирĕклĕ стрелоксем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем пурăнакан çурта темиçе граната вăркăнтарнă.

Çулсене юсамалли уйăхлăх

Бригада ыттисене пулăшать

Уйăхлăхăн малтанхи кунĕнчех Алексеевкăри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозăн (Етĕрне р.) çулсем юсакан бригади ĕçе хастарлăн тытăнчĕ. Кăçал 7-мĕш класран вĕренсе тухнă Арсентий Яковлевпа Коля Мицюков комсомолецсем кунсерен нормăпа 4 кубометр тăпра турттарас вырăнне 7—8-шар кубометр турттарчĕç. Çавнашкалах бригадăри ытти çамрăксем те хастаррăн ĕçлерĕç. Çапла майпа бригада малтанхи пилĕккунлăхăн графикне 190 процент тултарчĕ, куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тата 1.000 тенкĕ преми илчĕ. Бригадира Китаев юлташа костюм парса премилерĕç.

Хĕрлĕ ялав çул çинче ĕçлекенсене пурне те тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Трасса çинче ялавшăн кĕрешÿ пуçланчĕ. Малтанласа Китаевран юлсарах пыракан бригадăсем те ăна хăвалаcа çите пуçларĕç. Кăташри «Пионер» колхозăн Друян юлташ ертсе пыракан бригади нормăна 180 процент тултарса пыма пуçларĕ, «Комсомол», «Путь к социализму» колхозсен бригадисем те нормăна 190-шар процент тултарма пуçларĕç.

— Капла юрамасть, тусăмсем. Тата хастарлăнрах, тухăçлăрах ĕçлеме лекет, колхозран татах ĕç вăйĕ илмелле пулать, — терĕ Китаев ĕç хыççăн бригадăра ĕçлекенсене пĕр çĕре пухса. Пĕрне вăл колхоз председателĕ патне ĕç вăйĕ ыйтса хупна ячĕ. Колхоз председателĕ комсомолец Н. Яковлев тепĕр куннех çул çине 10 çын кăларчĕ.

Бригадăра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ. Кашнинех кунсерен 8—9 кубометр çĕр турттарма пуçларĕç, бригада кулленхи нормăна 220—250 процент таран тултарса пычĕ. Çапла вара уйăхлăхăн иккĕмĕш пилĕккунлăхĕнче те Хĕрлĕ ялав Китаев бригадинчех юлчĕ, бригадăна тепĕр хут премилерĕç.

Çапла ĕçлесе пырса бригада уйăхри графика 14 кун хушшинче тултарчĕ. Халĕ бригада ытти колхозсене пулăшать.

Н. ЦВЕТКОВ.

Уйăхлăх заданине пурнăçларĕ

ТАВАЙ. Июнĕн 30-мĕшĕнче район çулйĕр уйăхлăхĕн графикне пур ĕçсем енĕпе те пурнăçларĕ. Ку ĕçре «Красная Чувашия», «Красный Октябрь», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем аван ĕçлесе пычĕç. «Красная Чувашия» колхозран (председателĕ Иванов юлташ) çулйĕр ĕçĕнче Сергеев, Кондратьев, Пуршева юлташсем кулленхи ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултарса пычĕç. Доруправлени вĕсене кашнинех, паха костюм парса премилерĕ.

А. САЛМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Чугунçул валли—вутă

ÇĔМĔРЛЕ. Район чугунçул валли вутă хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăхăн графикне хатĕрлес енĕпе 86,6 процент, турттарас енĕпе 91,4 процент пурнăçланă. Вăрмантa çуран 44 çын, лашапа 45 çын ĕçлет. Вĕсем ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. «Большевик», «Красноармеец», «Молодая сила» колхозсем вунăкунлăхри графика ирттерсе тултарчĕç. «Красноармеец» колхозăн график тăрăх 75 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, паянхи куна 150 кубометр хатĕрленĕ. «Молодая сила» колхоз 100 кубометр хатĕрлес вырăнне 150 кубометр хатĕрленĕ.

Районра çулйĕр ĕçĕнче кая юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Красный пахарь», Ворошилов тата Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем ку ĕçе тивĕçлине пуçăнман. «Красный пахарь» (председателĕ Васильев) колхозăн график тăрăх 93 кубометр вутă хатĕрлемелле, июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне вăл 40 кубометр кăна хатĕрленĕ. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан колхоз та вунăкунлăхăн заданине 40 процента яхăн çеç пурнăçланă.

ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ĕçчен çамрăксем

Ирхине. Сехет стрелки саккăр çине куçрĕ. Çутă та таса цеха çамрăксем пĕрин хыççăн теприн кĕрсе вырнаçрĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ. Атă çĕлекен мастерскойĕн начальникĕ М. Бурмистрова юлташ, пурин ĕç хатĕрĕсене те тĕрĕслесе тухса, вĕсем паян планран ирттерсе 70 мăшăр ботинка çĕлесе хатĕрлемелли çинчен пĕлтерчĕ. Çамрăк рабочисем пурте пĕр харăс:

— Пурнăçлатпăр,—терĕç.

Цехра хĕрÿллĕ ĕç пуçланчĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вĕсем темиçе мăшăр ботинка çĕлерĕç.

— Маттур пирĕн ачасем. Хăйсем çамрăк пулин те, ватгисенчен юлмаççĕ, —тет Бурмистрова юлташ.

Тир-сăран завочĕн атă çĕлекен мастерскойĕнче 15 çамрăк ача ĕçлет.

Вĕсем хушшинче ĕç планне тултармасăр ĕçлекенсем вуçех те çук. Акă, 15 çулхи çамрăксем И. Семенов, Лев Авксентьев, О. Оскир, И. Павлов, Юрий Каталов атăçăсем кашни кунхи заданине 200-шер процент тултараççĕ.

О. Оскир 15 çулта. Вăл пĕчĕкренех ача çуртĕнче ÿснĕ. Вăл ашшĕ-амăшĕ вилнине астумасть. Кăçал çак заводра ĕçлеме тытăннă.

— Мана совет власĕ ÿстернĕ. Эпĕ халĕ хам тĕллĕн ĕçлекен пултăм. Мана ĕçре юлса пыни килĕшмест,—тет вăл, хăйĕн çамрăклăхне аса илсе.

Хатĕрлÿ цехĕ. Кунта пурте пекех çамрăк хĕрачасем. Цех начальникĕ Ильина юлташ пире кунта паллă стахановецсемпе паллаштарчĕ. Шура Вишневская, Нюра Фадеева, Х. Шайбина, С. Пуськова, Л. Страхова стахановкăсем кашнийĕ икĕ-виçĕ çыншăн ĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçри çитĕнĕвĕсемпе мухтанмаççĕ.

— Çук. Эпир лайăхах ĕçлейместпĕр-ха. Сахал-и пирĕн çĕршывра ĕç нормине 500—700-шер процент таран пурнăçлакансем. Вĕсемпе танлаштарсан, эпир нимĕн чухлех те ĕçлейместпĕр, теççĕ вĕсем. Цехра задание ирттерсе тултаракансем татах та нумай.

Чувяксем çĕлекен цехри çамрăк хĕрачасем те кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Остроумова, Безрукова, Семченко, Степаняк юлташсем кашни кунах задание 150—200 процент тултараççĕ.

Заводри главнăй инженер Башкиров юлташ пĕлтернĕ тăрăх, завод коллективĕнче çамрăксем 60 процента яхăн шутланса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче çакăн пек паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлени ватă производственниксене савăнтарать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Шупашкар.

Тырпулсене кăтартуллăн пухса кĕртĕр!

Пĕр чаçри чăваш боецĕсемпе командирĕсем Красноармейски районри колхозниксемпе колхозницăсем патне янă çыру

Тăван землякcем!

Çар çыннин çулĕ йывăр та аслă. Анчах Хĕрлĕ Çарăн паттăр дивизийĕсемпе полкĕсем снарядсемпе минăсем алтса тухнă лапамсем урлă, вăрçă вут-хĕмĕпе ĕннĕ уйхирсем тăрăх, юнпа витĕннĕ тĕмескесем çумĕн, ишĕлнĕ хуласемпе çунтарса янă ялсен пушă урамĕсем тăрăх хăйсен боевой ялавĕсене çĕнтерÿ патне мухтавлăн йăтса çитерĕç.

Эпир, сирĕн землякcем—фронта Красноармейски районран килнĕ чăвашсем, икĕ çулталăк каярах халăхăн аслă вăрçине кĕтĕмĕр, унтанпа яланах пĕр фронтăн малти позицийĕсенче тăшмана хирĕç хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешетпĕр.

Пирĕн хушăра чăвашсенчен тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе начар пурнăçлакансем пачах çук. Эсир, пирĕн землякcем, хăвăрăн ывăлăрсемшĕн чăнниипех те савăнма пултаратăр. Пирĕн паттăр землякcем Андреевпа Терентьев комсомолецсем тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте питех те паттăр ĕçсем туса, хăйсен ячĕсене ĕмĕрлĕхе чапа кăларчĕç. Терентьев юлташ (Итмар ялĕнчен) хĕллехи сивĕ çил-тăмансем вăхăтĕнче, Çурçĕрĕн питех те йывăр условийĕсенче командир приказне пурнăçласа, 15 кун хушши тăшманпа паттăррăн кĕрешнĕ. Вăл нимĕçсен вуншар салтакĕсемпе офицерĕсене «леш тĕнчене» ăсатнă, хăй те герой вилĕмĕпе вилнĕ. Анчах Терентьевăн мухтавлă ĕçне, вăл тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе чăн-чăн совет патриочĕ пек пурнăçланине тăван халăх ĕмĕр асра тытĕ. Совет правительстви Терентьев юлташа Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Е тата старши лейтенант Иванов юлташа илер. Вăл çапăçăвăн чи йывăр минутисенче хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Рота командирĕ пирĕнтен вăхăтсăр уйăрăлсан, кĕçĕн командир Иванов унăн вырăнне тăчĕ, пирĕн боецсене хаяр та йывăр çапăçăва ертсе кĕчĕ. Эпир вара питех те кирлĕ рубежа хÿтĕлесе хăвартăмăр. Правительство Иванов юлташа «За отвагу» медальпе наградăларĕ.

Вăрçăра пирĕн землякcенчен чылайĕшĕ кĕçĕн е старши командирсем пулса тăчĕç. Вĕсенчен уйрăмах Гурьев, Гордеев, Константинов юлташсем хăйсен обязанноçĕсене чыслăн пурнăçлаççĕ.

Пирĕн землякcенчен кашниех Сталин юлташăн кăçалхи майăн пĕррремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешет.

Тăван колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ сирĕн умма та пысăк та ответлă задачăсем лартрĕ. Эсир хăвăрах пĕлетĕр: сирĕн тăван çĕршывпа фронт валли тырпул, пахча-çимĕç, сĕт-çу, аш-какай, промышленность валли чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăмалла. Çак задачăсене пурнăçлассишĕн сирĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмелле.

Хальхи вăхăтра сирĕн умра тăракан ĕçсенчен чи ответлăраххи — тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе тунă ĕçсем сая ан кайччăр тесен, сирĕн уборкăна лайăх хатĕрленсе, кăтартуллăн ирттермелле.

Эпир фронтра пĕр пульăна та усăсăр сая ямастпăр, кашни пуля ирсĕр тăшмана тĕл пырса тивет, кашни пуля хаклă. Эсир те тырпулсене пĕр тăкаксăр тирпейлĕн пухса кĕртĕр. Кашни пĕрчĕ тем пекех хаклă. Çавăнпа уборкăна вăхăтра пуçăнса тырпулсене кĕске срокра пухса кĕртĕр, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парăр.

Тăван колхозниксемпе колхозницăсем, эпир ку çырăва малти линире, пульăсемпе снарядсем шăхăрса иртнĕ çĕрте çыратпăр. Хамăрăн боевой ĕçсем çинчен ытларах та çырма пулаттĕ, май пулсан татах çырса пĕлтерĕпĕр. Анчах эсир те хăвăрăн ĕçсем çинчен пире тăтăшах пĕлтерсе тăрăр. Пирĕн адрес: 36119-мĕш Полевая почта. Сирĕн паркхатарлă ĕç пире çĕнтерÿ тума хавхалантарса пырĕ

Старши лейтенант **ИВАНОВ**, лейтенантсем **ГУРЬЕВ, ГОРДЕЕВ**, кĕçĕн лейтенант **КОНСТАНТИНОВ**, старши сержант **КУЗЬМИН**, сержант **НИКОЛАЕВ**, ефрейторсем: **МОРОЗОВ**. **СКВОРЦОВ** т. ыт. те.

Уйăхри задание 148 процент тултарнă

Шупашкарти «Красный мебельщик» артель коллективĕ июнь уйăхĕнчи производство программине 148 процент, иккĕмĕш квартал планне 128 процент пурнăçларĕ. А. Николаев, Калиулин столярсем кулленхи ĕç программине 275—300 процента çити тултарса ĕçлеççĕ. Токарь Коновалов юлташ июнь уйăхĕнче хăйĕн заданине 300 процент таран пурнăçларĕ. Станочницăсем Филимоновăпа Алексеева юлташсем те ĕç нормине 250 процента çити тултарчĕç.

Артель коллективĕ июль уйăхĕнче тата тухăçлăрах ĕçлеме обязательство илчĕ.

В. ЕГОРОВ,
Артель правленин председателĕ.

Тырă вырса пуçтармалли машинăсемпе ĕç хатĕрĕсем пурте хатĕр пулччăр!

МАЛТИСЕМПЕ ТАНЛАШМАЛЛА

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Шуркасси ялсоветне кĕрекен «Майăн 1-мĕшĕ», Сталин тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитрĕç. «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз председателĕ коммунист П. Александров юлташ колхозра хăй тимĕрçĕ пулса ĕçлет. Вăл икĕ жнейкăна юсаса пĕтерчĕ, 40 çава туптарĕ, 59 çурла шăлларĕ. Колхоз уборкăна тухма хатĕр.

Колхозниксем уборкăна хатĕрленнĕ май 32 кĕреплеллĕ çава туса хатĕрлерĕç, 16 урапана юсаса лартрĕç. Кунсăр пуçне, 27 михĕ, 3 шăналăк, 22 вĕрен, 15 тилхепе çĕнĕрен турĕç. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксене ĕç вăхăчĕпе туллин усă курма шур майсем те туса параççĕ. Столовăй уçăлать. Продуктсем хатĕрлесе хунă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕн А. Ильин юлташăн колхозниксем хушшинче авторитечĕ пысăк. Вăл колхозниксемпе пĕрле ĕçлет, колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарать, хавхалантарса пырать. Çавăнпа колхозниксем те мĕншур ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыраççĕ. Колхоз пари ирхи çĕртме туса пĕтерчĕ, 21 гектар утă çулса пуçтарчĕ. Çавăн пекех тырпулсене пухса кĕртме те кунта тĕплĕн хатĕрленнĕ. Кĕреплеллĕ çавасем 80 тунă, 58 михĕ, лаша кӳлмелли хатĕрсене çителĕклĕ таран туса хатĕрленĕ. Колхоз тимĕрçи, отечественнăй вăрçă инваличĕ Леонтий Николаев икĕ жнейка тата 44 урапа юсаса хатĕрлерĕ. Çак кунсенче çавасене туптаса, çурласене шăлласа пĕтереççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз та (председателĕ Константинов) уборкăна начар мар хатĕрленет. Молотилкăна, 3 жнейкăна тата 28 урапа юсаса лартнă, çĕнĕрен 22 кĕреплеллĕ çава тунă.

Анчах та ялсоветĕнчи «Большевик», «Борец» колхозсем тырпулсене пухса кĕртме начар хатĕрленнĕ. Çак колхозсен председателĕсем васкамаççĕ. Ку колхозсенче тырпула машинăпа вырас ĕçе хакламаççĕ тата тырпула пухса кĕрес ĕçре кĕреплеллĕ çавасемпе усă курма шутламаççĕ. Çавпа пулах ĕнтĕ ку тарапчен пĕр кĕреплеллĕ çава та туман, транспорт инвентарĕсем çителĕксĕр.

«Борец» колхоз ирхи çĕртме тăвассипе юлса пырать. Тырпулсене те çумкурăкĕсенчен пачах тасатман.

Кая юлса пыракан колхозсен малта пыраканнисенчен пример илмелле. Мĕншур ĕçе фронт ыйтнă пек организацилесе, тырпулсене вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн социализмлă ăмăртăва сарса пымалла.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чăвашсен Ялхуçалăх Институтĕн вĕр енӳ хуçалăхĕнче шыв, вутă турттараç ĕçре пумайранпа ĕнтĕ хĕсĕр ĕнесемпе усă кураççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: хĕсĕр ĕнепе шыв т урттараççĕ.

Н. Ф. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатерленетпĕр

Пирĕн колхоз членĕсем çак кунсенче çĕрулми купаласа тата утă çулса пĕтерчĕç. Тырпула та çумкурăкĕсенчен тасатсах тăраççĕ. Вăйлă тырпулшăн кашни колхозникпе колхозница пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Халĕ колхоз тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленет. Пирĕн пĕтĕмпе 160,40 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарса кĕртмелле. Паянхи куна ялхуçалăх машинисене юсаса çитерпĕ: 2 жнейка, 1 косилка, паян тесен паянах уя тухма хатĕр. Жнейкăсемпе ĕçлеме Е. Степанова И. Белов колхозниксене çирĕплетнĕ. Колхозра çурласемпе ыттн вырмалли хатĕрсем те çителĕклĕ. 128 çурла, 68 çава, 75 кĕрепле, 54 сенĕк пурте юсавлă.

Тырă вырма тухнă кунах колхозра столовăй тата ачасен ясли ĕçлеме тытăнмалла, вĕсем валли апат-çимĕçсемпе сурттйĕрсем хатĕрленĕ.

Колхоз членĕсем халь, уборкăна хатĕрленес ĕçре хăшпĕр çитменлĕхсене палăртса, вĕсене хăвăрттăн пĕтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем кăçалхи тырпула пĕр тăккаламасăр, кĕске срокра пухса кĕме обязательство илчĕç.

А. ГАВРИЛОВ.

Элĕк районĕнчи «Красное Сормово» колхоз счетовочĕ.

Комбайнсене хăвăртрах юсамалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Ыраш вырма тухас кунсем çывхарса çитеççĕ. Анчах та районри машинно-тракторнăй станци ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтереймен-ха. Комбайнерсемпе комбайнеркăсем ремонт тума панă графика çинчен пĕлмеççĕ те. Мĕншĕн тесен МТС директорĕ Константинов юлташ вăл график çинчен комбайнерсене тĕплĕн каласа паман.

Байсубинăри трактор бригадинче, иртнĕ çулхи пекех, кăçал та 7-мĕш номерлĕ комбайн ĕçлемелле. Ку комбайна юсама тытăннăранпа пĕр эрне ытла иртнĕ. Ремонт вĕçленмест-ха.

Иккĕмĕш номерлĕ комбайна ремонтласа пĕтерес темелле, анчах унăн моторĕ хатĕр мар-ха. «Иртнĕ хĕлте комбайн моторĕсене кăларса пурне те пĕр çĕре, мĕнле май килнĕ çаплипех купаласа хунă. Çакăнта моторсен чылай пайĕсем улшăнса пĕтнĕ, кам маларах МТС-а çитнĕ, çавă лайăхрах пайсене илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, майĕпен, васкамасăр мăштăртатса ĕçлесипе паянхи кун тĕлне 4 комбайна çеç ремонтласа пĕтерчĕç, анчах вĕсен механизмĕпе уйрăм пайĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхман, актпа йышăнман. Çакна тума МТС-ра бензин çукки чăрмантарать.

Комбайн лайăх ĕçлесси унăн пайĕсем тĕрĕс-тĕкĕл пулнинчен килет. Çакă вăл кашни комбайнера интереслентерет. Анчах та МТС-ри 12 комбайнран 4 комбайнăн Эверт сăнчăрĕсем çук. МТС дирекцийĕ çав сăнчăрсене тупас тата киввисене юсас пирки шутласа пăхман-ха.

Машинно-тракторнăй станцин мастерскойĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Час-часах мастерскойри токарнăй станоксем ĕçлемесĕр лараççĕ. Июнĕн 25-мĕшĕнче мастерскойра станоксем сур кун ытла ĕçлемерĕç.

МТС-ри çитменлĕхсене ВКП(б) райкомĕ те пĕлет. Анчах ремонта хăвăртрах вĕçлес пирки нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ. МТС бригадисем валли куçса çӳрекен будкăсем, мастерскойсем çук. Комбайнсем валли улăм купалантармаллисем, зерноуловительсем туман.

С. ШАДИН.

Сӳрĕк ĕçлекенсем

СЕНТЕР. «Коминтерн» колхоз (председателĕ М. Кошламарова) районри ытти колхозсенчен юлса пырать. Çĕртме тăвас плана мĕнпурĕ те 50 процент çеç пурнăçланă. Çум çумлама пуçламанпа пĕрех. Çавăн пекех тырпула пухса кĕртме те япăх хатĕрленнĕ. Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаман, çавасемпе çурласене туптаса, шăлласа хуман.

Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп мар. Колхоз правленийĕ ĕçре чăрмантарса пыракансемпе кĕрешмест. Колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пур. Вĕсем пирки нимĕнле мера та йышăнмаççĕ. Çавна пулах кунта 80 тонна силос хывас вырăнне 20 тонна çеç хывнă.

А. СОЛОВЬЕВ.

Шкул ачисем ĕçре

КАНАШ. Сиккассинчи шкул ачисемпе пионерсем çуллахи вăхăтра колхозра тăрăшса ĕçлеме пулса социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Халĕ вĕсем çум çумлаççĕ, уя вырăнти удобренисем кăларнă çĕрте ĕçлеççĕ. Колхоз уйхирĕнче пуллен 125 ача ĕçлет. Скирдов, Воробьев, Кириллов вĕренекенсем ĕçрен пĕр кун та юлмаççĕ. Нормăна ялан ирттерсе тултарса ĕçлеççĕ.

И. МАКСИМОВ.

ПАХЧА-ÇИМĔÇЕ СИЕНЛЕКЕНСЕМПЕ КĔРЕШЕР

Ытти культурăсемпе танлаштарсан, пахча-çимĕçсем çулсеренех хурт-кăпшанкăсенчен нумай сиен кураççĕ.

Купăстасене, кăшшăмсене, çарăксене тата вĕсен йышши çимĕçсене пуринчен ытла пахча пăрçипе çĕр шăрçисем хытă сиен кӳреççĕ. Пуринчен ытла уяр та шăрăх çанталăкра вĕсем тапăнаççĕ.

Çавăнпа та пăрçасем хунаттине сиссенех ирхине, сывлăм типиччен, пахча-çимĕçсем çине кĕл е пусанпа табак тусанĕ хулăштарса сапса тухмалла.

Купăстасене купăста хурчĕсем питех те пысăк сиен кӳреççĕ. Çавăн пекех хура-симĕс хуртсем те çулçăна çисе ярса тунипе çеç хăвараççĕ. Тусан тĕслĕ симĕсрех хуртсем купăстан аялти çулçисем çине малтан ушкăнпа тапăнаççĕ, кĕркуннерехпе вара купăста пуçĕн шалти çулçисем çине кĕрсе каяççĕ.

Çак тăшмансене сăнаса тăрса уйрăмăн кĕрешсе пымалла. Вĕсене вăхăтра пĕтерсе пыни кирлĕ, мĕншĕн тесен ун пек тусан вĕсем хунаса каяймаççĕ.

Малтан çав хуртсен çăмартисене ватса тухмалла, унтан çăмарта хывнă хуртне те вĕлермелле.

Опылени вăхăтĕнче пĕр гектар пахча-çимĕç çине 8—15 килограмм кремнефтористăй натрий сапас пулать. Вăл çук пулсан ун вырăнне томат йышши курăксемпе усă курмалла.

Çапла тума чи малтанах курăк тунисене, çулçисене, çулхăнра ӳснĕ томат тымаррине касса илмелле те чугун ăшне е хуран ăшне хурса пирчетсе, шыв тултарса кăмакана е кăвар çине лартмалла.

Пĕр пиллĕк сехет вĕретнĕ хыççăн çав курăксен тунисене, çулçисене чăмăртаса илеççĕ те унăн шывне марлĕ витĕр е ала витĕр юхтарса кăлараççĕ. Унтан пĕр витре шыв çине пĕр стакан вĕретсе хатĕрленĕ шыва ярса пахча-çимĕçсем çине сирпĕтеççĕ.

Сирпĕтессине темиçе хут тӳса ирттермелле.

Вăрлăхлăх ӳстерекен купăстасене, кăшшăмсене тата çарăксене пуринчен ытла нăрăсем те пысăк сиен кӳреççĕ. Вĕсене пĕтерес тесен, пахча-çимĕçсем çинчен силлесе шывлă таз çине е витрене ӳкермелле те пĕтерсе тăкмалла.

Ку статьяра асăннисĕр пуçне пахча-çимĕçсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсем татах та пур, вĕсемпе кирлĕ пек кĕрешсе пырас тесен, вырăнти агрономсенчен пулăшу тата канашсем ыйтса тăмалла.

Агроном Р. ОСАНОВ.

Осоавиахим организацийĕ аван ĕçлет

ИШЛЕЙ. Ишекри вăтам шкул çумĕнчи осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕ хăй ĕçне нумай лайăхлатрĕ. Ку организацире ПВХО, тĕл пеме вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ. ПВХО кружокне пуçламĕш организаци председателĕ Ручьев ертсе пырать. Сывлăшран, химилле тапăнассинчен сыхланмалли правилăсене программа тăрăх вĕренсе пĕтернĕ. Çавăн пекех шкулти военрук Кузнецов ертсе пыракан тĕл пеме вĕренмелли кружок та винтовкăн, пулеметăн, гранатăн пайĕсене вĕренсе пĕтернĕ. Тĕл пеме вĕренмелли занятисем темиçе хутчен тӳса ирттернĕ.

Н. МИЛЮТИН.

Пирĕн земляксем

Юлиан Кушников

Унăн аслашшĕ Кузьма Петрович 1855—56-мĕш çулсенче Севастополе хӳтĕлекенсен ретĕнче пулнă. Вырăссен паттăр салтакĕсем çинчен каласа панине Юлиан пĕчĕккĕ чухнех нумай илтнĕ. Унăн ашшĕ те — Степан Кузьмич, флотра пулнăскер, Балтика матросĕсем çинчен, вĕсем нимĕнрен хăрама пĕлмен сывсем пулни çинчен каласа парса, ачан ĕмĕчĕсене çунатлантарнă. Ашшĕ Кронштадтра вĕренсе пурăннă хыççăн инçетри Америкăна кайса килни çинчен каласа пани Юлианăн чĕрине уйрăмах витĕмлĕн кĕрсе юлнă.

Унăн часрах ӳссе пысăк çын пулас килнĕ, аслашшĕпе ашшĕ пекех нумай çĕрсене çитсе курас килнĕ.

Хальхи Ишлей районĕнчи Матикасси ялĕнче ĕлĕкхи самавара пурнăç хĕсĕк пулнă пирки Юлианăн ашшĕ пысăк хуласенчи заводсенче рабочи пулса ĕçлесе çӳренĕ. Çапла вăл — Шупашкарта, Чулхулара, Коломнăра, Хусанта, Чĕмпĕрте пулнă. Сар службин хыççăн та вăл заводрах ĕçленĕ. Анчах халĕ ĕнтĕ вăл, совет саманинче чăваш çĕршывĕнче те пурнăç нечеклеме тытăннине кура, Шупашкара пуçнă. Вăл районсенчи типографисенче пичет машинисене вырнаçтарас ĕçпе ĕçленĕ.

Юлиан Кушников ашшĕ çулĕпех кайма ĕмĕтленет, анчах çав çула сарма халĕ ĕнтĕ ытларах майсем шыррине курать вăл. Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн 8-мĕш класĕнчен

вăл Горькинчи машиностроительнăй техникума вĕренме кĕрет. Çĕршывра çĕнĕрен çĕнĕ завод корпусĕсем ӳссе çитĕнеççĕ, вăйлă индустри хăватлăн сарăлать. Тăван çĕршыв валли машинăсем тума вĕренмелле!

Техникумра вĕреннĕ чухне Кушников комсомола кĕрет, спорт ĕçĕпе интересленет, темиçе хутчен парашютпа сикет. Сывлăш хăйĕн хăватлă вăйĕпе çамрăк чĕрене пĕтĕмпех çавăрса илет.

Техникумран вăл авиаци шкулне вĕренме каять. Ку тапхăр вăл—аслă вĕçевçен тапхăрĕ. Тĕпчере малтанхи геройсен ячĕсем кĕрлесе каяççĕ. Юлиан хĕрсех авиатор пулма вĕренет. Шкултан вăл штурман-бомбардировщик пулса тухать. Унăн пуçĕнче пĕр ĕмĕт кăна—килес çапăçусенче вырăс çарĕн паттăр салтакĕсем пулнă аслашшĕпе ашшĕн чысне, тăван çĕршыв хĕçпăшалĕн чапне çӳлте тытмалла.

Фашистла вăрă-хурахсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕрсен, кĕçĕн лейтенант Юлиан Кушников бомбардировщик çинче штурман пулса çапăçăва тухать. Пирĕн телейлĕ пурнăçа пĕтерсе лартма хапсăнакан сĕмсĕр тăшман пуçĕ çине чăваш халăхĕн ывăлĕ пĕр хĕрхенмесĕр вилĕм вучĕ тăкать, нимĕçсен вăрçă хатĕрĕсене, çар складĕсене аркатать, вут хыптарса çунтарать.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Юлиан Кушникова Совет Правительстви икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăрпа Хĕрлĕ Ялав орденĕсем парса наградăлать. Кушников юлташ лейтенант ятне илет.

1942 çул. Июнь уйăхĕнчи йывăр çапăçусем. Урса кайнă тискер кайăксем, хăйсем пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăр, Дон хĕррипелле, Кавказ енелле талпăнаççĕ, кăнтăр çĕçенхирĕнчи тинĕс пек тырпулсене таптаççĕ, хуласемпе ялсене çунтараççĕ. Совет боецĕсем кунне-çĕрне пăхмасăр, ывăнма пĕлмесĕр тăшманăн йышлă вăйĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Сталинла соколсем çĕр çинчи паттăр боецсене сывлăшран пулăшса тăраççĕ, тискер кайăксен броньăланă пуçĕсене аркатаççĕ.

Штурман Юлиан Кушников та пĕрехмай çапăçура. Вăл хăватлă карапа тĕрĕс çул кăтартса пырать, тăшман тĕлне çитсен, çав ирсĕр çĕлен-калтасен пуçĕсем çине аркатмаллах бомбăсем пăрахать. Командованин задачийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн, çапăçура иксĕлми паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Юлиан Кушникова чи пысăк наградăна — Ленин орденĕ памалла тăваççĕ. Анчах çав наградăна Кушников юлташ алла илеймест. Хăйне пăхса çитĕнтернĕ тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн юлашки сывлăшĕ тухиччен çапăçса, лейтенант Юлиан Кушников вăрçă хирĕнче геройла пуçне хурать. Аслашшĕпе ашшĕн ячĕсене, вырăс салтакĕсен авалхи традицийĕсене çӳлте тытса пырса, вăл тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхе вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртет.

Чăваш халăхĕ хăйĕн паттăр ывăлĕн ятне ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ.

И. НИКИТИН.

ТАСС пĕлтерни

Америкăри хăшпĕр хаçатсем пичетлесе кăларнă хыпарсем тăрăх, Кĕрешекен Франци Комитечĕ Лондонра Совет правительствипе вăрттăн килĕшӳ туса ала пуснă пулать, пропаганда тума Совет Правительствинчен 100 миллион франк укçа илнĕ пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çав хыпарсем нимĕн чухлĕ те тĕрĕс мар, вĕсем малтан пуçласа вĕçне çитиччен тахăшĕ шухăшласа кăларнă провокациллĕ хыпар пулса тăраççĕ.

Ют çĕршывсенче

Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Черчилль Лондон ратушинче тухса каланă сăмаха кĕскен пĕлтерет. Черчилль çапла каланă: «Кĕркунне йывăç çулçисем ӳкме пуçличчен Вăтаçĕр тинĕсĕнче тата ытти районсенче те хаяр çапăçусем пулмалла», — тенĕ. Черчилль каланă тăрăх, Атлантикăра май уйăхĕнче 30 подводнăй лодка ытла пĕтернĕ. Июньре пĕрлешӳллĕ нацисем çĕнĕ суднăсем тăшман пĕтерниччен 7—10 хут ытларах тунă. Май уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа Атлантика океанĕн пĕтĕм çурçĕр пайĕнче пĕр суну-илӳ караппе путарни те пулман пулĕ.

Рур çине бомбăсем пăрахни çинчен Черчилль çапла каланă: «Каçсем вăрăмланса пынă май Пĕрлешӳллĕ Штатсен сывлăш-çар вăйĕсем ӳссе пыраççĕ. Çапла пулса пынă май Германи промышленноçĕн пĕр пайĕ те, çар объекчĕсенчен пĕри те ӳссе пыракан сывлăшри вăйсем хăватлăран та хăватлăрах пырса çапнинчен хăтăлса юлаймĕ», тенĕ.

ГРЕЦИРИ ХУМХАНУСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Нумаях пулмасть, Америка авиацийĕ нимĕçсен Греции базисене тапăннă хыççăн, Греци хулисенче чылайĕшĕнче, çав шутра Салоникăпа Афинăра та вăйлă хумханусемпе Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Çавсене пусарма оккупантсен хăйсен войскисене урама илсе тухма тивнĕ. Темиçе çĕр демонстранта арестленĕ. Вĕсенчен нумайĕшне персе пăрахнă.

Итальянецсемпе нимĕçсем хушшинчи харкашу

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тунисра итальянецсемпе нимĕçсен войскисене çапса аркатнă хыççăн, унта официальнăй документсем нумай тупнă. Çав документсем нумайĕшĕ итальянецсемпе нимĕçсем пĕр-пĕрне кураймасăр пурăннине лайăх кăтартса параççĕ. Итальянецсен пĕр официальнăй донесенийĕнче «итальянецсемпе нимĕçсем хушшинче хирĕçӳ вăйланса кайни çинчен тата Итали хулисенче Гитлера хирĕç пăлхавсем час-часах пулса иртни» çинчен каланă. Нумай хуласенче «хирĕçӳсем ан пулччăр» тесе нимĕç салтакĕсене урам тăрăх форма тăхăнса çӳреме чарнă. Итальянецсен штабри офицерĕсенчен пĕри начальство ячĕпе панă хăйĕн рапортĕнче çакна хытах асăрхаттарса кăтартнă: «Италипе Германи салтакĕсемпе офицерĕсем пĕр-пĕрне кураймасăр пурăнни вĕсене пĕр-пĕрине юнашар тăрса çапăçма тивнĕ самантсенче питех пысăк сиен кӳрет», тенĕ. Çакăнпа пĕрлех çав офицер ĕнтĕ «палла мар çынсем» нимĕç офицерĕсене темиçе хутчен те вĕлерни çинчен пĕлтерет.

США-па АРГЕНТИНА

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина Вашингтона ятарласа мисси ярасшăн пулнă. Аргентинăн çав миссийĕ Вашингтонра США правительстине политика, экономика тата вăрçă ыйтăвĕсене сӳтсе-явмалла пулнă. Анчах та США Аргентина правительстви сĕннине йышăнман. Аргентинăн Кастильо правительстви вырăнне ларнă Рамирес правительстви США-ра хĕçпăшал, чĕртавар тата промышленность таварĕсем илме тăрăшать. Анчах та США Аргентинăна çакна систернĕ: Аргентина тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахсан кăна хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх ăна хĕçпăшал пама пулать, тенĕ.

Вашингтонри правительство учрежденийĕсенче шутланă тăрăх, Рамирес унччен пулнă Кастильо президентĕн политикинех тытса пырать. Аргентинăра осаднăй положенине халĕ те пăрахăçа кăларман, ăна тата çирĕпрех пурнăçласа тăраççĕ. Вашингтонра Аргентинăн хальхи правительствин членĕсенчен пĕри те союзниксем майлă тесе шутламаççĕ.

КĔСКЕН

● Вăрçă пуçланнăранпа Европăри шывсенче англичансем лартнă минăсем çине кĕрсе кайса, тĕнĕл держависен çар карапĕсемпе груз турттаракан суднисем сахалтан та 400 судно шыва путнă е сиенленнĕ. Çапла майпа пĕтнĕ суднăсем шутĕнче нимĕçсен «Гнейзенау» ятлă пароходĕ пур, унăн тоннажĕ 18.000 тонна пулнă.

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ ТРОБРИАНД, ВУДЛАРК ТАТА ÇĔНĔ ГЕОРГИЙ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче тăракан хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен войскисем Çĕнĕ Гвинея утравĕ çывăхĕнчи Тробрианд тата Вудларк утравĕсен ушкăнĕсене йышăннă. Çавăн пекех тата Çĕнĕ Гвинея утравĕ çинче союзниксем Нассау заливĕн çыранне тата Соломон утравĕсем шутĕнче тăракан Рендов утравне йышăнса илнĕ.

Тробриандпа Вудларк утравĕсем çинче тăшман хирĕç тăман.

Союзниксен войскисем çав вăхăтрах тата Çĕнĕ Георгий утравĕсем çине пырса аннă. Халĕ унта çапăçусем пыраççĕ.

Çак операцисене пурне те союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи пĕрлешӳллĕ вăйĕсен главнокомандующийĕ Макартур генерал ертсе пырать.

ШВЕЦИ СУДНИСЕМ ГЕРМАНИ СЛУЖБИНЧЕ ТĂРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Фолькевильян» ятлă хаçат июнĕн 25-мĕшĕнче тухнă номерĕнче «Швеци суднисем Германи службинче тăраççĕ» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра хаçат çапла çырать: «Хаçатсенче час-часах шведсен палласа илмелли палăллă суднисене шыва путарни çинчен вулатăн. Шведсен пур суднисен те çавăн пек паллăсем пур. Германин çар флочĕ тара илнĕ пирки, çав флот команди илсе çӳрекен Швеци суднисем те çавăн пек паллăсемпех çӳреççĕ. Ку вăхăт тĕлне Германи шведсен нумай суднине вĕсен экипажĕсемпе пĕрлех тара илнĕ. Çав суднăсем пурте Швеци флагĕпе тата Швеци паллипе çӳреççĕ, вĕсем пурте пĕрмаях Германипе Норвеги порчĕсем хушшинче, çавăн пекех тата Германипе Финлянди хушшинче çӳреççĕ. Вĕсем Швеци порчĕсене сул майлă кăна кĕрсе тухаççĕ. Çавăн пекех вĕсем пĕрмаях Треллеборга кĕреççĕ, унтан вĕсем продовольстви илсе тухаççĕ. Çав суднăсем хушшинче 200 тоннăллă теплоход пур. Вăл Бременпа Гамбург хушшинче çӳрет, вĕсенче кăшни эрнерех икĕ хутчен пулать. Тата тепĕр çавăн пек 200 тоннăллă теплоходах хĕлкаçах нимĕç портĕнче тăчĕ. Унта вăл нимĕçсен подводнăй лодкисене горючи парса тăнă. Халĕ çав теплоход Швецирен Германие сăмала турттарать. Вĕсемсĕр пуçне тата тепĕр 15.000 тоннăллă судно Германирен Финляндие нефтьпе бензин турттарать. Çав обществăн 8.000 тоннăллă тепĕр судно пĕрмаях Германипе Норвеги хушшинче çӳрет. Кусемсĕр пуçне, шведсен нимĕçсем тара илнĕ тата 200 суднине çăмаллăнах кăтартса пама пулать».

Пĕлтерӳ

Çак июлĕн 4-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми: «Англипе США фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳре».

Лекцие лектор **Якерсон** юлташ вулать.

Билетсене сад кассинче сутаççĕ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шоферсен курсне вĕренме илеççĕ. Вĕренме çак çулхи июль уйăхĕн 10-мĕш числинче пуçлаççĕ. Вĕренесси 2 уйăх вĕренмелле. Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ. 17 çултан кĕçĕн пулмалла мар. (1926-мĕш çулхи август уйăхĕнчен каярах çуралнисене илмеççĕ). Вĕренме илнисене уйăхсерен 150 тенкĕ стипенди параççĕ, апат çитереççĕ (ирхине тата кăнтăрла).

Çак адреспа пырса ыйтмалла: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 51-мĕш номерлĕ çурт, кадрсен пайĕ.

Кĕрес текен колхозниксен хăйсемпе пĕрле колхозри ĕçрен хăтарни çинчен калакан справка пулмалла.

3—1

Июнь уйăхĕн 19-мĕшĕнче Рос-тлаввино совхозĕн территорийĕнчен **лаша çухалнă.** Тĕсĕ — турă, çамки çинче çăлтăр пур, сăмсисем хушши шупка тата пĕр шурă пăнчă паларса тăрать, 8 çулта, çӳллĕшĕ 148 сантиметр.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Çĕрпӳ хули, Чăвашсен опытлă зоотехнически станцийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. л.